К 84.09
(2Чув)
А94
8816-чув



АЛЕКСЕЙ АФАНАСЬЕВ

# ПИРӖН ИНТЕРНАТ

ЧӐВАШИЗДАТ · 1965

Национальная библиотека ЧР
4-008816

ЛИСТОК СРОКА ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ
УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Количество пред. выдач

8816 чув

С(Чув)
А 94



Алексей
Афанасьев

# Пирĕн интернат

поэмă



Чăваш АССР кĕнеке
издательстви
Шупашкар — 1965

*Ӳкерчĕкĕсем*
*В. Агеевăн*

ПРОВЕРЕНО
20 10 11 ОКТ 2017

8816 чув.

Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР



# ТИМУШ

Пĕчĕк тусăм пур — Тимук,
Куçĕ çĕмĕрт пек хура.
Тимука пĕлмен çын çук
Тукасри тăкăрлăкра.

Пӳрчĕ вĕр-çĕнĕ вĕсен,
Ырă ун çути, ăшши...
Сарлака урайĕнчен
Сарăлать юман шăрши.

Вун ача пĕр кил-çуртра,
Пĕр атте те пĕр анне.
Хăш чухне сĕтел тавра
Шăнăçма хĕн вĕсене.

Ашшӗ тимӗрҫӗ иккен,
Тимӗртен тӑвать тем-тем...
Сунтала ҫапса илсен,
Сирпӗнет чӑл-пар! хӗлхем.

Янракан сунтал ҫинче
Ташласассӑн мӑлатук,
Сар хӗвел пекех ҫиҫсе,
Йӑл кулса тӑрать Тимук.

Амӑшӗ ӑна кӑҫал
Ҫӗнчӗ фермӑна пӗрле.
Чӑмпӑл-чӑмпӑл кӑвакал
Тулнӑ улӑхри кӳлле.



Нартлатса, пăркаланса
Уткалаççĕ улпутла.
Ыталас килет тытса
Кӳлĕри кăвакала.

Аслă пиччĕшĕ — Борис—
Уй-хиртен килмест çулла.
Колхозра вăл тракторист:
Çăкăр çитерет яла.

Ларкалать-мĕн Тимахви
Пиччĕш тракторĕ çине.
Аслă хир юрри-кĕвви
Илĕртет ача чунне.



Тимушран та кĕçĕнрех
Шăллĕсем урай тулли.
Йышлă çемьере питех
Тимуша лекмест тутли.

Тумланма тăрсассăн та
Çĕннине курать сайра.
Пиччĕш çĕтеймен атта
Çутатать вăл уявра...

Тимахви, Тимуш, Тимук---
Виçĕ ятлă вăл ялта.
Пур пĕрех ача хăш чух
Хурланать çав, тупата!

Мĕншĕн пĕчĕк пулнă-ши?
Пысăкланĕ-ши хăçан?
Эх, Тимукăм-Тимахви,
Тӳсмелле пăртакçă сан!

* * *

Çичĕ хут сехет çапать.
Тĕттĕмленчĕ. Лăпкă каç.
Пăсланать каçхи апат—
Тимушсем апатланаç.

Тутлă пиçнĕ аш-пăша
Валеçеççĕ кашнине:
Пĕчĕк чашăк — Тимуша,
Пысăк чашăк — ашшĕне.

Амăшĕ паян темме
Тимуша ытла сăйлать,
Лайăхрах хушать çиме,
Куçĕнчен савса пăхать.

Мĕншĕн пĕчĕк ывăла
Пит чыслаççĕ-ха паян?
Тимуша инçе çула
Ăсатаççĕ-мĕн ялтан.

Аçталла каять Тимуш?
Кĕсйинче ун çук пĕр пус,
Уринче те кив калуш,
Пуçĕнче те кив карттус...

Вата ашшĕ Йăкăнат
Хыпарлать çапла хавас:
«Çĕнĕ шкул пур — интернат,
Тимуша унта ярас!

Вĕрентер-ха Тимуша,
Уçăлтăр çын хушшинче!»
Амăш кайрĕ шухăша:
«Вĕрентесчĕ те... инçе...»

Пĕчĕк-çке-ха ывăлĕ,
Урине ĕне пусман.
Тем курĕ те тем пулĕ
Çын çине пĕччен ярсан...

Те вăл тутă, йăвашскер,
Кам саплас кĕпе-йĕмне?..
Курмĕ амăш эрнешер
Хăйĕн савнă ывăлне.

Каçпала, кĕтӳ килсен,
Кăпăклă сĕт ĕçмесен,
Курмасан чăваш мунчи,
Çын пулайĕ-ши ачи?..

* * *

Ир вăратрĕç Тимуша.
Чалăшшăн пăхать хĕвел.
Тĕпелте Мавра кушак
Кустарса çӳрет йĕкел.

«Сывă пул эппин, кушак,
Эп кайсан та мăрăлтат.
Вырăну сан — пĕчĕк сак,
Ман пулас кил — интернат!»





Темĕн шел пек, Тимука
Кусĕнчен пăхать йытти:
Те туять вăл тунсăха,
Те кĕтет çăкăр хытти...

Кĕтесре юлать пит шел
Пĕлтĕрхи вăлта хулли.
Хĕрхенсе пăхать хĕвел —
Ашă мар халь ун кулли.

Ашшĕ çитрĕ лаççинчен,
Кӳлнĕ çăмăл тăрантас.
Хураçка ун хыçĕнчен
Хашкаса чупма хавас.

Хураçкаçăм, сыв пулах!
Йыт-качка килсен, вĕси!
Çӳрейместĕн эс шкула,
Ĕç-хĕлӳ сан — вĕресси...

Ашшĕ тытрĕ тилхепе,
Чĕриклетрĕ çил хапха.
Асатмашкăн çемйипе
Тухрĕç пĕчĕк Тимука.



# Мĕнлескер вăл интернат?

Телефон юпи юрлать,
Йăнлатать йĕс пăралук.
Пысăк çын пек, çĕн шкула
Вĕренме каять Тимук!

Автобус тĕлне çитсен,
Чарăнчĕ çӳрен лаша.
Амăшĕ пĕр-ик хутчен
Ыталарĕ Тимуша.

Ăсату-çке, ăсату!
Тухатех çав куççулли...
Вăхăт, вăхăт, сапăр ту —
Юлатех калаçмалли.

Автобусĕ, çĕнĕскер,
Пĕр хускалчĕ кăшкăртса.
Силленсе юлать кĕпер,
Пыраймасть шывпа юхса...

Таврана пăхать ача:
Куç тулли кĕрхи илем!
Иртейсе юлаç хыçа
Аякри хирсем, ялсем...

Ак хула хĕрри. Вокзал.
Автобус вокзалĕ, тет.
Тĕрлĕ халăх, тĕрлĕ ял
Туянать кунта билет.

Автобусĕсем нумай,
Пĕринчен пĕри хитре!
Шикленмесĕр лар та кай —
Çитĕн час çитес çĕре!

Хулара çӳрет Тимук,
Ашшĕнчен юлмасть пĕр шит.
Çитмĕл çичĕ пăралук,
Урамсем те çитмĕл çич...

Ак хула хĕрне çитсен,
Йăлăхсассăн çӳреме,
Шурĕ тухрĕ пĕр енчен
Шурă чĕнтĕрлĕ хӳме.

Уçăлать картиш енне
Юмахри пек чул хапха.
Речĕпе хӳме хĕрне
Лартнă лăпсăркка çăка.

Картишне кӗрсен, садра,
Шучӗ çуккă йывăçсен.
Ырă мар-им шăрăхра
Йывăç сулхăнне кӗрсен?..

Вăрăм ӗмӗрлӗ вăрман
Кашласа ларсан ялан,
Сивӗре те çын шăнман,
Шăрăхра та аптраман!

Виçӗ хутлă виçӗ çурт
Çавраха картишӗнче.
Пысăк кантăксем çап-çут,
Алăкӗ те темиçе!

Кӗчӗç пысăк алăкран.
Çырнă: «Ваннă», çырнă
«Душ».
Ашшӗнчен аташасран
Шикленсе утать Тимуш.

Тепӗр алăк тăррине
Çырнă: «Кастелянская».
Тимахви енчен енне
Пăркалать кăна мăя.

Алăк уçăлчӗ вăштах.
Пӳлӗмӗ — тумланмалли.
Темиçе сентре, кашта,
Япала унта тулли!

Тухтăр пек, шур халатпа
Вăркăшса çӳрет аппа.
Тимуша вăл пӗр çӗклем
Тыттарать япаласем.







Мĕн кăна памарĕ-ши?..
Мăшăр атă, çут пушмак,
Çĕн кĕпе-йĕм, пиçихи,
Пальтопа кĕске пиншак...

Супăнь, пит шăлли таран
Пачĕç пирĕн Тимуша.
Ашшĕ тĕлĕннĕ, куран,
Путнă тарăн шухăша.

Щёткă пур шăл тасатма,
Пачĕç çыхнă мунчала.
— Кайăр,— терĕç,— çăвăнма
Халĕ пирĕн мунчана.

Ваннăйпа душ пӳлĕмне
Кĕртрĕ ашшĕ ывăлне.
Çăвăнать те йăкăнат,
Ватă чунĕ савăнать.

Çăвăнсассăн, шăлăнсан,
Тасалать ӳтри тусан.
Тĕкĕре пăхса кулан,
Турапа çӳçе туран.

Тухтăр пăхрĕ Тимуша
Пӳрнипе шакка-шакка:
Çыхланман-и чир-нуша
Пĕчĕк, çамрăк шăм-шака?

Çӳллĕшне, йывăрăшне
Виçрĕç акă çарамас.
Тимахви чĕрне вĕçне
Тăнăччĕ те — юрамасть.

Пирĕн пĕчĕк Тимука:
— Ӳсен,— терĕç,— ан васка!
Çырмара ишен пуль-ха,
Кăкăру сан сарлака.

Паттăр,— терĕç лăпкаса.—
Çирĕп пултăр сывлăху.
Çу аллусене таса,
Кирĕк ан куртăр хăлху...

Якалсан, тирпейленсен,
Тухтăрпа канашласан,
Тимуша йĕркипелен
Кĕртрĕç тепĕр алăкран.

Икĕ рет сĕтел-пукан.
Лар чипер. Ан хуç, ан ват.
Аппăшĕ пĕр кантăкран
Антарса парать апат.

Ачасем хăйсем кунта
Хатĕрлеççĕ сĕтелне.
Чăн-чăн повар пек ăста
Тыткалаççĕ хăйсене.

Пăсланать умра яшка,
Сап-сар çу урпа пăтти.
Ĕç те çи эс, ан васка.
Чейĕ — пан улми тути.

Кулленех тăван килте
Курнă тĕрлĕ аш-пăша.
Пултăран яшки, серте
Тутлă пекчĕ Тимуша.



Килтинчен те тутлăрах
Пĕçерeççĕ-мĕн кусем.
Хырăм тутă чух, паллах,
Кăмăл пулас çук кичем.

Уçă кăмăлпа тăрса
Утрĕç, тухрĕç урама.
Чун юрлать. Çи-пуç таса,
Ырă, ирĕк пурăнма!..

Çатма пек тип-тикĕс çул —
Хăш тĕлте шăвать ура.
Виçĕ хутлă çĕнĕ шкул
Çĕкленсе ларать умра.

Пусмисем ун шур чултан,
Хăпараççĕ çӳлелле.
Çав шкулта-мĕн ырантан
Тимахвин вĕренмелле.

Сылтăмра та пысăк çурт —
Тинĕсри шур карапах.
Çав çурта ним мар çил-юр —
Ăшăн, кан, итле юмах...

Çавăнта-мĕн Тимахвин
Малашне пурăнмалла.
Тусĕсем ун — виç çĕр çын,
Тусĕсем ун — çур хула!

Вун ачаллă çемьере
Тăвăр марччĕ Тимука:
Ик çынна пĕр минтере
Пайлаканччĕ мар-и-ха?

Унӑн халӗ пурте пур:
Шур минтерӗ, утиял.
Ҫывӑр, ырӑ тӗлӗк кур,
Вӗренме пуҫтар вӑй-хал.

Тимуша пурте аван,
Килӗшет пӗрре пӑхсах.
Паллашсассӑн, вырнаҫсан,
Ашшӗнчен уйрӑлмаллах.

Ашшӗ савӑнаҫлӑ ун,
Ывӑлӗшӗн хӗпӗртет:
— Ырӑ хамӑрӑн саккун!
Хамӑрӑн влаҫа рехмет!

Вулама, ҫырма вӗрен,
Шӑл ҫыртса вӗрен ӗҫе.
Тар тӑкса ҫӗр ӗҫлекен
Ҫӗрес ҫук ҫӗр айӗнче.

Ҫӑмӑл утрӗ Йӑкӑнат
Аллине сула-сула.
Ылтӑн ҫулҫӑ тӑкӑнать,
Тӗсӗпе витет ҫула.

Ҫул ҫинче тӑрать Тимуш,
Каяс пек инҫе-инҫе.
Уринче ун ҫӗн калуш,
Ҫӗн карттус ун пуҫӗнче.



# ÇĔНĔ ТУС-ЙЫШ ХУШШИНЧЕ

Юлчĕ ашшĕнчен Тимуш.
Кунĕ янкăр. Çил йăваш.
Çывăхра пулмарĕ тус,
Курăнмарĕ пĕр юлташ.

Тупрĕ Тимахви пĕрне,
Хăй пек пĕчĕк Макçăма.
Кĕчĕç йывăçсем айне
Иккĕш вăй виçсе пăхма.

Тумĕ кивĕрех лешин,
Тĕсĕ-пуçĕ хĕрлемес.
Çывăхра çук урăх çын,
Кĕрешме кансĕрлемест.

Тытрĕç акă пĕр-пĕрне —
Çитнĕ тейĕн ака туй.
Аякра-ха çуркунне,
Ешермест-ха анлă уй...

Ачасемшĕн çав-çавах!
Кĕркунне те сивĕ мар.
Кĕрешмелĕх вăй пурах,
Сăн-питре çунать кăвар.

Пĕчĕк çын вăл кунĕпе
Выляса та ывăнмасть.
Килĕнчен тухать ирпе,
Таврăнать киле сĕм каç.

Кĕрешмелĕх вăй пур çав.
Пĕчĕк çын вăл — пăшатан!
Пытарсассăн хутаçа,
Шăтарса тухать унтан.



8816 чув.
...шская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР

Пăхаттир пекех вěсем!
Вăй тапать-çке тулалла:
Е курас килет вěçсе,
Е лаша пек чупмалла...

Пашкаса, хашăлтатса
Кěрешеççě иккěш, ав,
Уйăраймăн шыв сапса,
Кăшкăраç: «Ура ан яв!»

Икě паттăр пěр-пěрне
Лăскаса кěрешнě чух
Таврара мěн пуррине
Сăнамашкăн вăхăт çук.

Килнě тăнă-мěн хыçа
Пěр кěтӳ ача-пăча.
Тимуша тытать пěри,
Аллисем вут пек вěри.

Пăхрě çаврăнса Тимуш:
Тěлěк-и ку е чăнах?
Йăл кулса тăрать Аннуш!
Кӳршě хěрě Аннушах!

Пурăнатчěç кӳршěлле
Тимушпа Аннук пěрле.
Иртнě çул çак Аннука
Леçрě амăш аякка.

Йăпанатчě хěрача
Выляса пуканелле,
Яланах тем шыраса
Пăхкалатчě çěрелле...

Хуйхă пурччě куçěнче —
Ашшě çукчě çав вěсен...
Савăнатчě йăл çиçсе,
Ун патне Тимуш килсен.

Иккёшё пёрле чухне
Кирпёчрен тăватчĕç çурт,
Пушă шăрпăк арчине
Пыл тума хупатчĕç хурт...

Аслатийĕ авăтса,
Çумăр чашласа çусан,
Тимахви пĕве туса
Лартнă шыв хĕрне арман.

Шыв чаксассăн, çĕр типсен,
Çил чупсассăн ял тавра,
Вĕçтеретчĕç хут çĕлен
Шавлă ачасем сăртра...

Ак мĕнле иккен Аннук!..
Улшăннă, паллас та çук.
Çĕнĕ тум тăхăннăскер,
Пукане пек вăл чипер.

Иккĕмĕш класра ларать
Халь Аннуш интернатра.
Шăкăлтаттарса вулать,
Шутлама пĕлет ăсра.

Пит хăюсăрччĕ ялта,
Килĕнчен тухман ниçта.
Кĕтнĕ пулăшу ялан
Кӳршĕ хĕрĕ Тимушран.

Ун чухне Тимуш часах
Хӳтĕлетчĕ Аннуша,
Шăхăратчĕ ши! анчах,
Чĕтрететчĕ сывлăша...

Пурнăç халĕ урăхла,
Хăрамасть Аннуш нимрен,
Сиккелет кула-кула,
Çук пĕри те тивекен!

Питĕ савăнчĕ Тимук,
Вăл пĕлмест ларма-тăма:
— Пирĕн кӳршĕ ку...
Аннук,—
Тет хаваслăн Макçăма.

Паçăр çеç Тимук пĕччен
Кайнăччĕ хуйха-суйха,—
Тусĕсем нумай иккен!
Юратаççĕ Тимука!

Хыçалта тăрать кулса
Вĕсенчен аслăраххи.
Тимуша вăл мухтаса:
— Паттăр,—терĕ,—Тимахви!



Шăлавар кĕсйисене
Чикнĕ икĕ аллине.
Лартнă вăл чалăштарса
Çут сăмсаллă карттуса.

Тимушпа паллашнă май
Хăй çинчен калать хайхи:
— Эс манпа пулсан, малай,
Аптăрамăн, Тимахви!

Эпĕ пиллĕкмĕш класран.
Эпĕ саншăн пулăп шеф.
Эп мĕн хушнине тусан,
Ман пекех эс пулăн шеп!

Ёнтĕ эп вун виççĕре.
Çук атте-аннеçĕм ман.
Аптрамастăп пур пĕрех,
Нихăçан та аптраман.

Пулнă эпĕ Мускаври,
Çитнĕ эпĕ Хусана!
Эс манпа чух ан хăра,
Тус тăвасшăн эп сана!



Абдулла, Абдул тесе
Малашне эс чӗн мана! —
Темӗн те пӗр итлесе,
Тимахви кулма манать.

Пӑрӑнчӗҫ хӗрачасем,
Вӗсене кунта кичем.
Ҫак мухтанчӑк Абдула
Юратмаҫҫӗ пулмалла.

Кусӗсем ун хӗсӗкрех,
Шурӑ шӑлӗсем сайра.
— Кӑтартатӑп, — тет, — халех
Тимуша пӗр мыскара!

«Мыскари мӗнех пуль-ха?..
Чим... Камит ку, камитех!..»
Хусканма пуҫлать хӑлха,
Хураҫка хӑлхи пекех!

Ним те Тимуша шел мар,
Абдул пек пулас тесен!
Симӗс вӗр-ҫӗнӗ хунар
Вӑл каларчӗ кӗсйинчен.

Йӑлтӑркка чипер хунар,
Куҫӗ — ҫутӑ кӗленче,
Аякка сапать кӑвар
Тӗттӗм-тӗттӗм каҫсенче.

Парнеленӗччӗ ӑна
Аслӑ пиччӗшӗ Борис.
Пӗчӗкҫӗ ӗҫчен ҫынна
Пулнӑччӗ вӑл пысӑк чыс.



Çывăрма выртсан, çумра
Вăл çывратнă хунара.
Хăвăрт аннă нӳхрепе
Шанчăклă хунарĕпе.

Вăрăм майлă хурĕсем
Çывăрсассăн çырмара,
Тимахви: «Тупса килем!» —
Тенĕ, çутнă хунара.

Хаклă пулнă çак хунар
Темĕнле кучченеçрен...
— Эс ан пул-ха хыт кукар, —
Терĕ Абдулла чеен, —

Хăвăн хаклă хунарна
Парнеле мана, Тимуш!
Çав хунарсăр та сана
Пулмĕ ман çумра хăруш.

Хунара илсе Абдул,
Хăвăрт чикрĕ кĕсйине,
Тупнă пек чи пысăк мул
Шăхăрчĕ хăй юррине:

— Санпала эпир, малай,
Пулăпăр чи çывăх тус!
Юлташсем пулсан нумай,
Кирлĕ мар сана çĕр пус!

* * *

Вĕренет Тимуш шкулта,
Максăмпа ларать пĕрле.
Хуратать вăл шур хута,
Вуламашкăн та пĕлет.

Йӗркене Тимуш чухлать,
Мӗн каланине итлет,
Ҫынпала пӗрле тӑрать,
Физзарядкӑ ирттерет.

Кран айне пуҫне чикет,
Ҫӑвӑнать вӑл хыванса.
Куҫӗ ҫӑлтӑр пек ҫиҫет,
Сӑнӗ-пичӗ — тап-таса.

Тимуша урай сӗрме
Вӗрентеҫҫӗ каҫсерен,
Вилкӑпа апат ҫиме
Тимахви пӗлмен иккен...

Шурӑ ҫухава ҫӗле,
Пушмака тасат, ҫутат...—
Пурне те вӗренмелле,
Ҫавӑн пек вӑл интернат!



# ВĂРМАНТИ УЯВ

Çĕр пăсланчĕ, типрĕ вар.
Витĕнчĕ çĕр ылтăнпа.
Сунарçа чĕнет сунар.
Пур инкесене — кăмпа...

Пăнтăртатрĕ параппан,
Горн сасси ян-ян янрать.
Вăрмана каять паян
Пирĕн йышлă интернат.



Тек кăçал пулмасть çулла,
Çуллана ăсатмалла!
Юрласа ташла-ташла
Кайĕ çу кăнтăралла.

Ак уçланкă. Ак вăрман.
Тăршшĕпех кăмпа шăрши.
Ярăнса юртса кунтан
Иртнĕ тин кăна пăши.

Йĕр хăварнă уçланка,
Хăй пытаннă чăтлăха.
Эй, туратлă мăйрака,
Ма пиртен таратăн-ха?

Юрă, юрă ян каять,
Купăсне тăсать пĕри.
Çулçине вăрман тăкать,
Кăмăлсăр вăрман çари.

Уяври пек вăрманта!
Кĕрешеççĕ, чупăшаç...
Кам халь çĕрĕк тунката—
Вырăнтан хускалаймасть...

Тунката пек ларакан
Пулмĕ пирĕн хушăра.
Ав, чупаççĕ вуннăн тан:
Кам малта-ши, кам кайра?..

Талпăнса килет Тимук,
Юлас çук вăл тихаран,
Юмахра пур пĕчĕк Мук—
Вăл та иртмĕ Тимукран.

Пĕчĕк çеç пулсассăн та,
Çил пек чупрĕ Тимахви!
Ылтăн сăрлă вăрманта
Янăрать мухтав кĕвви!

Тимуша Аннук мухтать,
Саламлать килсе Абдул,
Аннуша юлма хушать:
— Пирĕнпе ан пыр,—тет,—
юл!..

Çуйхашать çапла Абдул:
— Чемпион!—тет—Чемпион!
Иртĕ ултă-çичĕ çул—
Эсĕ пулăн Ардальон!*

Ну, Тимук, паян сана
Пачĕç тем чухлех канфет.
Ту пĕрре мана хăна!
Сăйланассăм ман килет!

Мĕн калатăр-ха Тимук?
Мĕн калайтăр Абдула?
Пуррине пытарас çук
Вăл карттус ăшне, шала..

Аякка сикет Тимуш,
Вăл каллех илет парне.
Савăнать татах Аннуш,
Саламлать хăй кӳршине.

Абдулла каллех кунта,
Тимушран хăпмасть ниçта!
Калăн мăрăлти кушак,
Сăйлама хăйне хушать...

---

* Ардальон Игнатьев — чăваш, тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ.

— Çăтă кучлă Абдула,
Тимахви, тек ан сайла!—
Тет Аннушĕ Тимуша,—
Уншăн мĕн сана нуша?..

Çăварне карса ларма
Вăл куккук чĕппийĕ мар.
Хăй пултартăр-ха чупма,
Парнӳне текех ан пар!

Хытă тытрĕ Тимуша
Кӳршĕ хĕрĕ хальхинче.
Кĕреймерĕ ик хушша
Абдулла тек хĕсĕнсе.

Ах, шăртланчĕ вăл епле!
Калаçмарĕ пĕр сăмах,
Утрĕ ушкăн еннелле
Çăлăнăç тупассăнах.

Çамрăк халăх вăрмана
Янратать, илем кӳрет.
Асатаççĕ çуллана
Ĕнтĕ виççĕмĕш сехет.

Пĕр çĕрте кула-кула
Ачасем кĕрлеççĕ пит:
Хай йӳтетмĕш Абдулла
Кăтартать иккен камит.

Камитрен те шепреххи
Пур-мĕн тепĕр тамаша:
Хытрĕ кайрĕ Тимахви—
Тухрĕ пĕр ача ташша!

Пичĕ-куçĕ тĕм-хура,
Сăмала çӳçĕ кăтра.



Вăл ташланă вăхăтра
Сирпĕнсе тăрать тăпра!

Тимуша курсассăнах
Ташлама чарать Абдул:
— Ут, Тимуш, ху çулупах,
Умăнта сан такăр çул!

Савăнăç вăрман тулли
Янраса тăрать вăрах...
Канăç çук Тимуш валли,
Вăл çӳрет Абдул таврах.

Тимахви хыпаланать,
Абдула чĕнсе илет,
Хутлă канфетпа сăйлать,
Илтесси килет: «Рехмет!»

Леш анчах «Рехмет» темест,
Кутăна перет ача!
Пĕчĕк вăкăр пек тӳрккес,
Каçăртать пĕрмай пуçа.

Ачасем рете тăрсан,
Тин пуçлать Абдул сăмах:
— Тимахви, эс паянтан
Аннушпа ан туслашах!

— Эп унран пăрнассăм çук...
Мĕншĕн-ха ман хирĕçес?—
Тӳп-тӳрех калать Тимук.
Çилленет Абдул. Чĕнмест.

Çилленсен аçа кăркка
Хĕрелсе хăпартланать,
Халь Абдул та Тимука
Çавăн евĕр туйăнать.

Ĕнтĕ вăхăт таврăнма.
Сыв пулах, вăрман, ката!..
Виç-тăвата çухрăма
Горн янрарĕ вăрманта...

* * *

Абдулла сивĕннинчен
Хăрамарĕ Тимахви.
Унсăр та туссем пĕтмен —
Пур çĕнни те, пур кивви...

Аннушпа та вăл пĕрле,
Макçăмпа пĕр партăра...
Тупрĕç иккĕшĕ пĕрре
Пилĕк тенкĕ мунчара.

Пилĕк тенкĕ хут укçа!
Кам пулсан та ӳкернех.
Икĕ пĕчĕкçĕ ача
Чупрĕç шкулалла тӳрех.

Çитнĕччĕ кăна шкула,
Хирĕç пулчĕç Абдула,—
Пысăк укçана курсан,
Кĕç илмерĕ алăран...

— Ма паратăр,— тет,—çынна
Çакăн чул пуянлăха?
Тупăнмарĕ вĕт мана!..
Тупăнать çав ухмаха!..—

Кӳрентерчĕ Абдулла
Тимуша та Макçăма —
Ун çинчен çитсен шкула,
Шарламарĕç никама...

Пачĕç тупнă укçине
Воспитатель аллине:
— Тупăр,—терĕç,—хуçине,
Мантăр хăйĕн хуйхине...

Тăратаççĕ шкул умне
Икĕ пĕчĕкçĕ туса.
Ват директор вĕсене
Сăмахларĕ тав туса.

Макçăмпа Тимуххана
Алă çупрĕ пĕтĕм шкул.
Ал çупмасăр шăп кăна
Тăчĕ хĕрелсе Абдул...







# ТУСЛĂ ПУЛĂР ĔМĔРЕХ!

Хыттăнрах тапать чĕре —
Çывхарса килет уяв,
Çĕкленет мĕн пур çĕре
Хĕрлĕ çулăм пек ялав.

Уявпа пĕрле шкула
Тепĕр савăнăç килет:
Ачасем каникула
Пурте каймалла киле.

Ашшӗ-амӑш пуррисем
Сиккелеҫҫӗ, хӗвӗшеҫ.
Хатӗрлеҫҫӗ парнесем —
Кирлӗ тӗрлӗ кучченеҫ!

Пулмасан атте-анне
Эсӗ кайӑн кам патне?
Уҫӑн камӑн хапхине?
Шаккӑн камӑн алӑкне?

Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса
Кам йӑпатӗ кӑмӑлна?
Минтере кӑпӑшлатса
Кам ачашлӗ-ши сана?..



Чылаях тăлăх-турат
Пур çав Тимушпа пĕрле.
Вĕсене халь кам шырать?
Кам кĕтет тăван киле?

Килĕсем те çук вĕсен,
Çук хăшин нимле тăван.
Тăвансем пурах пуль, тен,
Тупасси анчах тахçан...

Шухăша кайса ларать
Абдулла сад пахчинче.
Типнĕ çулçă çаврăнать
Чĕлтĕр-чĕлтĕр пăр çинче.

Çаврăнать сар çулçă çеç
Ĕнтĕркенĕ пахчара.
Шăнкăрч шăхăрса илмест —
Кайнă ăшă кăнтăра.

Кайнă кураксем вĕçсе
Савнă йăмрисем çинчен.
Хурлăхлăн кăриклетсе
Иртнĕ тăрнасем çӳлтен...

Курака та чĕрĕпе
Вырăн пур-çке тĕнчере.
Кăткăсем те пинĕпе
Пурăнаççĕ пĕр тĕмре.

Мĕншĕн тăлăх-ха Абдул?
Вĕçеймест ма ниçталла?
Йывăр питĕ. Пысăк чул
Пуснă, тейĕн, Абдула.

Кирлĕ мар вăл никама:
Тимуша та Макçăма...
Эрнене каникула
Чĕнекен çук Абдула...

Çавăнпа вăл пĕр-пĕччен
Тунсăхлăн ларать садра.
Эх, Абдул! Тунсăхличчен
Пăхкала-ха ху тавра!

— Пирĕнпе атя яла,—
Тет Тимукĕ Абдула.—
Аттепе анне сана
Питĕ чĕннĕ хăнана!

Ыр çынсем пурах çав, пур!
Çаврăнмасть Абдул чĕлхи:
Тимуша-çке турĕ хур...
Каçарать-шим Тимахви?..

Намăс пулчĕ ачана,
Тимуша сĕнет хунар...
— Ман парне вăл. Ил хăвна,—
Тет Тимушĕ.— Кирлĕ мар...

Савăнать Абдул, кулать,
Вăл çиçет çут çăлтăрла.
Пуçласа кайса курать
Ĕмĕрте пĕрре яла!

* * *

Тимушсен кил-çуртĕнче
Тăвăр мар-мĕн никама.
Урайне сараç кĕççе
Каçхине йăваланма.





Амăшĕ, хуран хырса
Чашăк-тирĕк çусанах,
Вилнĕ евĕр ывăнса
Çывраканччĕ каçранах.

Ывăнмарĕ вăл паян,
Ывăнмарĕ нимĕн чул:
Тимахви çăвать хуран,
Чашăксем çăвать Абдул.

Çук, кĕтмерĕç ик ĕçчен
Аслисем ĕç хушасса:
Кĕççине саркаличчен
Çурĕç урайне таса...



Иккӗш выртрӗҫ ик хӗрне,
Варринче — вӗт-шакӑрри.
Кашкӑр, Тилӗ юмахне
Юптарма пуҫлать пӗри.

Ҫил шавланӑ май хуллен
Шӑпланать каҫхи юмах.
Ачасен ыйхипелен
Калаҫать сехет анчах.

* * *

Ирхине ирех Аннуш
Килсе кӗчӗ алӑкран:
— Эй, Тимуш, ӑҫта хӑну?
Халиччен ма ҫывӑран?

Ҫывӑрмаҫҫӗ Тимушсем.
Ир вӑраннӑ, паҫӑрах.



Тăтăшах-мĕн шăллĕсем
Калама хушаç юмах.

Ирхине юмах ярсан,
Килĕ, çийĕ шур упа!
Урамра — шап-шур тăман,
Юр çăвать-мĕн каçранпа.

Тăрăр хăвăрт, ачасем!
Илĕр йĕлтĕр, çунашка!
Юрĕ çутăр çунăçем
Урама, тăкăрлăка...

Тĕпелте Манюк аппа
Чупкалать сĕтел тавра.
Суханпа та сар çупа
Ăшалать тем çатмара.

Кăмаки çунать вĕри,
Ун çути сĕтел çинче.
Сак çинчи кушак çури
Мăрлатать ун ăшшинче.

Савăнать Манюк аппа
Килнĕ пĕчĕк хăнапа:
— Пирĕн харсăр Тимуша
Пит аван,— тет,— юлташа!

Абдулли мĕн ачаран
Тăлăх ӳснĕ, пĕчченех...
Вуннăш хамăрăн пулсан,
Вун пĕрмĕш те пирĕннех!

Ăшă сăмаха илтсен,
Куççульне шăлать Абдул.
Чăннипе те çак иккен
Чун йăпатмăш кил, аул...

Ыр сăмах вăл тĕнчере
Темĕнрен те тутлăрах:
Сĕт ан пултăр чӳлмекре,
Пултăр чуншăн ăш сăмах!..

Сĕчĕ те вăл пултăр-и,
Пултăр çуллă икерчи,
Пултăр тӳпере тăри,
Чĕп кăлартăр шăнкăрчи...

Çак илемлĕ тĕнчере
Туслăхран ырри ним çук.
Туслă пулăр ĕмĕрех,
Абдулпа Аннук, Тимук!..



## ТУПМАЛЛИ


Стр.

Тимуш . . . . . . . . . . 3

Мĕнлескер вăл интернат? . . . . . 9

Çĕнĕ тус-йыш хушшинче . . . . . 16

Вăрманти уяв . . . . . . . . 25

Туслă пулăр ĕмĕрех . . . . . . 32



Алексей Андрианович
Афанасьев

НАШ ИНТЕРНАТ
*поэма*

На чувашском языке

Для детей младшего школьного возраста

Редактор *Н. И. Иванов.*
Технический редактор *А. Ф. Никитина*
Художественный редактор *М. А. Ильин*
Корректор *Р. И. Белова.*

---

Сдано в набор 10/XI-1964 г. Подписано к печати 31/XII-1964 г.
Изд № 152/64. Формат 60×84/16. Объем 2,6 печ. л. Учетно-изд. л. 1,71.
Заказ № 4316. Тираж 2000 экз. Цена 9 коп.

---

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, К. Маркса, 36

---

Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров
Чувашской АССР
г. Чебоксары, Володарского, 5.

Цена 20 коп.



ӲКЕРЧĔКĔСЕМ
В. АГЕЕВĂН.